24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ФЕВРАЛЬ 28 ШАМАТКУН 50(6075) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Чăваш Коммуни

Ĕç дисциплинине çирĕплетсех пырар

Отечественнăй асла вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах пирĕн çĕршывăн ĕç фронтри патриотĕсемпе патриоткисем нимĕç оккупанчĕсене тĕппипех çапса çĕмĕрмешĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне мĕн кирлине пурне те туса парассишĕн хĕрсех тытăнчĕç.

Производствăн пур отраслĕсенче те кашни рабочи, кашни работница, мĕнле те пулсан тухăçлăрах ĕçлесе, паха тата ытларах продукци туса парасшăн çунать. Стахановла движени, нумай станокпа тата тĕрлĕ профессисемпе ĕçлесси ытларах та ытларах сарăлса пырать. Вăрçă условийĕсенче пур ĕçе те вăрçă интересĕсене пăхăнтармалла, ĕç дисциплинине çирĕп пулмалла.

Халĕ вăхăтра пирĕн предприятисенчи, транспортри, промартельсенчи рабочисем çирĕп дисциплинăпа пăхăнса ĕçленине пула куллен-кун çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Нумаях пулмасть Шупашкарти пиçиххи фабрикинче ĕçлекенсен пĕр цеха хĕсĕк вăхăтра ĕçе явалла пулнă. Çак ĕçе тума ятарласа организациленĕ 5 çынран тăракан бригада 15—16 сехет хушши ĕçлесе, задание срокра пурнăçланă. Ку ĕçре уйрăмах С. Царов юлташăн бригади лайăх тĕслĕхсем кăтартнă.

Халĕ пирĕн предприятисенче, заводсемпе фабрикăсенче темиçе çĕршер хĕрарăмсем, фронта кайнă вăй-питти арçынсем вырăнне тăрса, ик-виçшер норма таран тултарса ĕçлеççĕ. Хăйсен паха ĕçĕсенче большевикла ĕç дисциплинин тĕслĕхне кăтартаççĕ. Сăмахран, Йĕпреçри «Кооплеспром» артельри машиннăй отделенире ĕçлекен 15 çынран 10-шĕ—хĕрарăмсем. Вĕсенчен нумайĕшĕсем ĕç нормине 200 процент ытла тултарса пыраççĕ. Кунта Бокарева, Иванова юлташсем хăйсене уйрăмах палăртрĕç.

Канаш деповĕнчи васкавлă заказсене пурнăçласа пыракан фронтовой бригада халиччен нихăçан та пулман производствăллă çĕкленÿпе ĕçлет. Вĕсем 24 сехет хушшинче тумалли ĕçсене 10—12 сехет хушшинче туса кăлараççĕ. Ку бригадăра Ефимов, Казаков юлташсем сменăри нормăна 400 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çар боецĕсем, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, хаяр тăшмана хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра, пĕтĕм çĕршыв оборона валли ĕçленĕ вăхăтра, ĕç вăхăчĕн кашни минутине хакламалла. Халăхăн кашни пĕр пусне оборона вăйхăватне çирĕплетнĕ çĕре ярас тесе, предприятисен оборудованийĕсене, чĕртавара, электроэнергие перекетлеме, тирпейлĕ тыткалама пĕлес пулать. Хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсемпе витме хăтланакансем, ĕçлеме ÿркенекенсем, ĕçрен пăрăнакансем пирĕн хушăра пĕр çын та пулмалла мар.

Анчах пирĕн предприятисемпе учрежденисенче тата ытти организацисенче те мухтавлă стахановецсемпе, двухсотниксемпе пĕрлех, ĕç дисциплинине пăсакансем те тупăнкалаççĕ-ха. Сăмахран, Шупашкарти «Кооператор» артель председателĕ пулса ĕçленĕ коммунист Чиганаев производствăра ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырас вырăнне ĕç вăхăтĕнчех, рабочисемпе пĕрле, ĕçме тытăннă. Çавна пула Чиганаев юлташ ĕçрен пĕр сехет малтан пăрахса кайнă. «Красный кустарь» артельре ĕçлекен комсомолка Г. Белякова январĕн 20-мĕшĕнче ĕçе 35 минута кая юлса тухнă. Хлебокомбинатра ĕçлекен Н. Сергеев январĕн 24-мĕшĕнче 6 сехет хушши ĕçре пулман. Çавнашкал çынсем ĕç дисциплинине пăснине тĕрлĕ сăлтавсемпе тÿрре кăларма пăхаççĕ. Анчах кунта нимĕнле сăлтав та пулма пултараймасть. Хальхи вăхăтра кашнин çакна лайăх ăнлансa илмелле: ĕç дисциплинине пăсакан, ĕçре ыттисене чăрмантаракан, ĕç йĕркине дезорганизацилекен çын хăйĕн кирревсĕр ĕçĕпе тăшмана пулăшать. Ун пек çынсене вăрçă вăхăтĕнчи çирĕплĕхпе ответ тыттармалла.

Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен предприятисенче, фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисенче рабочисемпе служащисен ĕç дисциплинине куллен çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе массăллă агитаци ĕçне анлăн сармалла, Стахановла движение малалла хăватлантарса пымалла, двухсотниксен, трехсотниксен йышне татах та ытларах ÿстермелле, малта пыракан стахановецсен ĕç опытне мĕнпур рабочисен хушшинче сармалла. Ку тĕлĕшрен предприятисенчи хисеп хăмисем, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем питех те нумай ĕç тума пултараççĕ. Яланхи пекех, социализмлă ăмăртăва коммунистсемпе комсомолецсен пуçарса, ертсе пымалла.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун Сталин юлташ панă приказ совет халăхĕн фронтри тата тылри паттăрлăхĕпе хастарлăхне, ĕçсынисен политикăллă активлăхне татах та ытларах çĕклерĕ. Сулпуçăн чĕнĕвĕ çине ответлесе, фабрикăсемпе заводсенчи, учрежденисемпе организацисенчи ĕç дисциплинине, ĕçри йĕркелĕхе татах та ытларах çирĕплетер. Çакă пире фронт валли çĕнĕрен те çĕнĕ тата ытларах та ытларах продукци туса кăларма пулăшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе пăрахса, малалла кусна тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 24-мĕшĕнче нимĕçсене, малтан пĕлтернĕ пек 20 самолет мар, 34 самолет пĕтерсе тăкнă.

Февралĕн 25-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 17 самолетне персе антарнă, тăшманăн аэродромĕсем çинче 4 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çав кун нимĕçсен 21 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 65 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 70 лавне яхăн, зенитнăй пулеметсен 36 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 2 складне, горючи складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 5 вагона çĕмĕрсе тăкнă, кĕпере ишĕлтернĕ, противник пехотине 6 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр гвардейски часть çĕрлехи çапăçура тăшман пехотин виçĕ батальонне çапса аркатнă та халăх пурăнакан кирлĕ пункта йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн стрелковăй чаçри артиллеристсемпе минометчиксем тăшман пехотин вăйлăлатнă батальонĕн контратакине сирсе пăрахнă. Противник, çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине çити пăрахса хăварса, каялла чакнă.

* * *

Калинин фронтĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн подразделени, хăюллă атака туса, противникăн батальонне çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 220 вилли выртса юлнă. Нимĕçсен батальонĕн командирĕ капитан тата штабри 4 офицер вилнĕ. Батальонăн штабне тата паха документсем тытса илнĕ, 56 салтака, пĕр офицера тата 4 ефрейтора тыткăна илнĕ.

* * *

Плутин юлташ командир пулса ертсе пыракан красноармеец-разведчиксен группи, противникăн тылĕнче боеприпассемпе хĕçпăшал складне тупнă та, хăйĕн чаçне тавăрăнса, разведка курнине командованине пĕлтернĕ. Командовани подразделенисенчен пĕрне çав склада тытса илме приказ панă. Пирĕн боецсем, противник вырнаçнă çĕре систермесĕр пĕрсе кайса, нимĕçсен часовойĕсене пĕр систермесĕр вĕлернĕ те склада тытса илнĕ. Складра пулнă снарядсене, станковăй пулеметсене, минометсене, танксене хирĕç пемелли тупăсене, телефон кабельне хамăрăн чаçа илсе тавăрăннă.

* * *

Нимĕçсен 293-мĕш пехотнăй дивизийĕн 5-мĕш уйрăм батальонĕн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ фельдфебель Фридрих Штайгер çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтра пирĕн çарăн тылĕнче партизансен активлăхĕ вăйлăн ÿсрĕ. Пирĕн батальона партизансене хирĕç кĕрешме уйăрчĕç. Пире У. районĕнчи партизансен отрядне пĕтерсе тăкма приказ пачĕç. Çак отряд пĕрмаях пирĕн чаçсене хăратса тăратчĕ, боеприпассемпе апат-çимĕç тиенĕ обозсем çине тапăнатчĕ. Мана партизансен лагерĕн вырăнне тупма разведкăна ячĕç. Анчах та партизансем кунти вырăнсене лайăх пĕлсе тăраççĕ, эпир вĕсене шыраса тупиччен вĕсем пире пĕтерсе тăкрĕç. Эпĕ тыткăна лекрĕм, партизансем мана совет чаçĕн штабне илсе пычĕç».

* * *

Нимĕçсен артиллерин 177-мĕш уйрăм дивизионĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Курт Кунеш çапла каласа панă: «Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне эпĕ январь уйăхĕнче çитрĕм. Малтанхи çапăçусенчех пирĕн тупăсене вырăссем тытса илчĕç е стройран кăларчĕç. Çавăн хыççăн мана 40 салтакпа пĕрле пехотăн 131-мĕш уйрăм батальонне стрелок вырăнне ячĕç. Резервран илнĕ салтаксен нумайĕшĕн вăрçас кăмăл çук. Нумайăшĕсем: «Кун пек вăрçиччен тыткăна парăнсан лайăхрах», теççĕ. Çакăн пек калаçнисене эпĕ çул çинче килнĕ чух, поезд çинчех илтрĕм. Эпĕ тыткăна лексе хăрушлăхран хăтăлнăшăн савăнатăп».

* * *

Нимĕçсен вилнĕ ефрейторĕ Герберт Кюль çумĕнче вăл хăйĕн тăванĕсем патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Апат-çимĕç йĕрĕнмеллех начар, ăна та пулин питĕ сахал параççĕ. 7 кун умлă-хыçлă эпир йÿçĕ купăста анчах çиетпĕр. Пĕр сăмахпа каласан, йытă пурнăçĕ...»

* * *

Гитлер бандичĕсем, Харьков облаçĕнчи Савинцы ялĕнчен тухса кайнă чухне мирлĕ халăха пĕтĕмпех çаратнă. Ялти чылай çуртсене вут тивертсе çунтарса янă, юлашкисене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Урамсенче гитлеровецсем асаплантарса тата персе вĕлернĕ 118 çын виллине тупнă.

* * *

Новосибирскри Чкалов ячĕпе тăракан заводри стахановецсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăллă çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тунă. Слесарь Смородин юлташ хăйĕн заданине 839 процент, слесарь Расторгуев юлташ 843 процент тата слесарь Рожнов юлташ 600 процент тултарнă.

* * *

Лениногорск рудникĕнчи (Казахстан) стахановец-бурильщиксем Добродеев, Лобанов тата Ноздрачев Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле 4 уйăхри заданине тултарнă.

Февралĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Ленинград фронтĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противника хирĕç виçĕ кун хушши çапăçса, нимĕçсен çĕрпе йывăçран тунă 11 огневой точкине, 30 блиндажпа землянкине çĕмĕрсе тăкнă, нимĕçсен танкне, 3 орудине, 24 пулеметне, минометсен 4 батарейине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн войскăсем активлăн çапăçса противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2500 çынна вĕлернĕ.

* * *

Дегтярев юлташ командир пулса ертсе пыракан стрелковăй чаçри боецсем нимĕçсен хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнĕ туса хунă С. ялне тытса илнĕ. Пирĕн артиллерин снарячĕсем хум пек çурăлса пыни хыççăн куçса, пирĕн пехотинецсем вăйлă атака тунă та нимĕçсене ялтан хăваласа кăларнă тата тăшманăн паха коммуникаци линине татса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Князьков юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Калинин фрончĕ) Т. районĕнчи хаяр çапăçусенче нимĕçсене 4 оруди, 32 пулемет, 200 винтовка, 30.000 патрон тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшал тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна вĕлернĕ. Тепĕр участокра Зыгин юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 160 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Крым партизанĕсен К. тата Я. юлташсем ертсе пыракан пĕрлешнĕ отрячĕсем нимĕçсемпе румын войскисен продовольстви пысăк бази çине пырса тапăннă. Оккупантсем пухнă запассене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем нимĕçсен чаçне пысăк поражени кÿнĕ. 5 сехет хушши çапăçнă хыççăн гитлеровецсен, çапăçу хирне хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине ытла пăрахса хăварса, каялла чакмалла пулнă.

* * *

Нимĕçсен 208-мĕш пехотнăй дивизийĕн 337-мĕш полкĕн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Рудольф Бедо çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта Францирен январь уйăхĕн варринче килсе çитрĕ. Малтанхи кунсенех эпир 20-мĕш полкри салтаксемпе тĕл пултăмăр. Вĕсем çине сивĕлтен пăхсанах питĕ кулмаллаччĕ: салтаксем хăйсем çине тĕрлĕрен çĕтĕк-çатăксем чĕркесе пĕтернĕччĕ, питĕ мĕскĕн сăн-сăпатлăччĕ. Анчах та 20-мĕш полкăн ротисенче пĕтĕмпе те 18—25-шер çын анчах юлни çинчен пĕлсен, кулас шухăш пачах пĕтрĕ... Эпир пурте хуйхăра пуçларăмăр. Январĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 6-мĕшне çитиччен пирĕн 5-мĕш ротăн 110 çын пĕтрĕ. Вилнисем хушшинче: рота командирĕ обер-лейтенант Гольдгоф, лейтенант Гешвандер, унтер офицерсем Фильцингерпа Франц, обер-фельдфебель Нитшке, фельдфебель Форкерт. 6-мĕш ротăн çухатăвĕсем татах та пысăк. Унта 190 çын пулнă. Тепĕр виçĕ эрнерен 6-мĕш ротăра 45 çын анчах юлнă».

* * *

Финсен вилнĕ шюцкоровецĕ çумĕнче (унăн хушаматне палăртма май килмен) арăмĕ янă икĕ çырăва тупнă. Çав çырусенчен илнĕ хăшпĕр вырăнсене илсе кăтартатпăр: «Фронтран кам та пулсан, хăçан та пулсан чĕрĕ таврăнĕ-ши? Пирĕн правительсем хăйсем те çисе яма пултарайман пăтă пĕçерчĕç. Текех ĕнтĕ ниçтан та çăкăр кĕтмелли çук. Кунта пурсăмăра та пире выçса вилесси кĕтет. Финляндия тахçанах мир тунă пулĕччĕ, анчах та ăна Германия чарса тăрать. Мир тумасан, пирĕн арçынсем пурте пĕтеççĕ, эпир те пурте пĕтетпĕр, эпĕ çакна шансах тăратăп».

* * *

Орел облаçĕнчи Новозыбково хулинче Гитлер бандичĕсем тунă тискер кайăкла ĕçсем çинчен сведенисем илнĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем пĕр çĕртех 380 çемьене пĕтерсе тăкнă. Вĕсем стариксене, хĕрарăмсене тата ача-пăчасене пин çынна ытла персе вĕлернĕ, пĕчĕк ачасене чĕрĕлех çĕре чикнĕ.

* * *

Ашхабадри паровоз деповĕнчи чи лайăх машинистсем Климов, Ковалевич, Чешенко, Качалов, Козленков, Масюков юлташсем уйăх çурă хушшинче 63.000 килограмм нефть перекетленĕ тата поездсем çÿрессине чылай хăвăртлатнă.

Çĕнтерӳ инçе мар

Паровозсем юсакансен смени вĕçленчĕ. Рабочисем пурте пĕр çĕре пуçтарăнчĕç.

Митинг.

Парторганизацин секретарĕ Сергеев юлташ Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказне вулать. Васкамасăр кашни сăмаха татса вулать вăл.

— «...Пĕтĕм совет çĕршывĕ çинче хĕрлĕ ялавсем каллех çĕнтерÿллĕн ялкăшма тытăнас вăхăт инçе мар ĕнтĕ».

Сулпуçăн çак ытттăн сăмахĕсене илтсен, рабочисем кăкăр туллин сывласа илчĕç, вĕсен чĕрисем—савăнăçпа, ÿт-пĕвĕсем хастарлăхпа тулаççĕ. Умри çĕнтерĕве ĕненсе тăни рабочисене татах та ытларах, тухăçлăрах ĕçлеме кăмăл кÿрет, вăй-хăват парать, лайăх ĕçлеме хавхалантарать.

— Эпир халь приказ итлерĕмĕр,— тет митингра сăмах илсе Евтихеев юлташ.—Сулпуçăн кашни сăмахĕ—пирĕн пурăнăç, пирĕн кĕрешÿ, пирĕн çĕнтерÿ. Вăл çĕнтерĕве часрах тăвас тесен, пирĕн, железнодорожниксен, татах та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлемелле, фронта вăхăтра тата кирлĕ таран хĕçпăшал, тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç парса тăмалла.

Депо коллективĕ ку тарана çитиччен тунă ĕçсем пĕчĕккĕ мар. Çĕнĕ çултан вара унăн чаплă машинисчĕсем йывăр тиенĕ 118 поезда кирлĕ çĕре илсе çитернĕ. Хуçалăх расчетне куçнă паровозсем пĕр январь уйăхĕнче кăна 8 пин тенкĕлĕх топливо перекетленĕ. Юлашки уйăхсенче кăна фронтовой комплекснăй бригадăсем социализмлă пулăшу йĕркипе Хусан деповне 9 паровоз юсаса панă.

Сăмах депо начальникĕ Прокофьев юлташ илет.

— Пирĕн депо,—тет вăл, рабочисене хавхалантарса,—Хусан чугунçулĕ çинче пĕрремĕш вырăн йышăнатчĕ. Çавăншăн чугунçул Управленийĕ пире хăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕ. Эпир çав ялава хамăр алăран нихăçан та кăлармăпăр!

Рабочисем, стахановецсем ку таранччен тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармасăр, малалла татах та лайăхрах ĕçлеме, техникăна юсавлă тытма, топливăна перекетлеме, йывăр тиенĕ поездсене ытларах илсе çÿреме тата кашни паровоза вĕçке вăхăтра юсаса кăларма пулчĕç.

Т. ИВАНОВ.

КАНАШ, ДЕПО. (Телефонпа, хамăр корр.).

Ĕçри çĕнĕ çĕкленӳ

КАНАШ. (Телефонпа). «Красное пламя» колхоз членĕсем Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказне пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илсе вуласа тухрĕç.

— Юратнă наркомăн Сталин юлташăн приказĕ пире татах та тимлĕнрех ĕçлеме, фронтпа тыл валли ялхуçалăх продукчĕсем ытларах та ытларах парса тăма чĕнет,—тет ватă колхозник Матвеев юлташ.—Пирĕн колхозăн выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне татах та ытларах ÿстерме, тырă акмалли çĕр лаптăкне сарма пур условисем те çителĕклĕ, ăна пирĕн кăçал тумаллах.

Матвеев колхозникăн сĕнĕвне колхозниксем йышăнчĕç. Тырпул тухăçлăхне кăçал татах та ÿстересси çинчен, фронта ытларах пулăшасси çинчен чылай колхозниксем тухса калаçрĕç.

«Красное пламя» колхоз кăçал çуртырисем акмалли çĕр лаптăкне 50 гектар сарать. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухма çĕнĕ хавхаланупа тытăнчĕç.

П. СЕРГЕЕВ.

ЧĂВАШ АССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔПЕ ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔН БЮРОВĔ ЙЫШĂННĂ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Колхозсен, колхозник килĕсен тата единоличник хуçалăхĕсен обязательнăй йĕркепе аш-какай памалли çулталăкри нормăсем çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1942 çулти февралĕн 15-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай памалли халиччен пулнă нормăсене, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ 1939 çулти июлĕн 29-мĕшĕнче йышăннă постановленипе çирĕплетнĕскерсене, улăштарса, Хĕрлĕ Çар валли аш-какай ытларах кирлине шута илсе, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, колхозсемпе колхозниксен килĕсем çумне тата единоличниксен хуçалăхĕсем çумне çирĕплетнĕ çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕнчен (ку шута акмалли çĕрсем, садсемпе пахчасем, улăхсемпе çарансем кĕреççĕ) аш-какай памалли нормăсене Чăваш республикинчи районсем тăрăх çакăн пек туса çирĕплетес (чĕрĕ виçене килогрампа шутласан):

Районсен ячĕсем	Колхозсем 1 гектартан	Колхозниксен килĕсем	Единолич. хуçалăхĕсем
1. Улатăр	4,5	40	80
2. Кувакино	4,5	40	80
3. Пăрачкав	4,5	40	80
4. Етĕрне	4,5	40	80
5. Елчĕк	4,5	40	80
6. Элĕк	4,0	40	80
7. Вăрнар	4,0	40	80
8. Йĕпреç	4,0	40	80
9. Ишлей	4,0	40	80
10. Калинински	4,0	40	80
11. Куславкка	4,0	40	80
12. Комсомольски	4,0	40	80
13. Хĕрлĕ Чутай	4,0	40	80
14. Сĕнтĕрвăрри	4,0	40	80
15. Октябрьски	4,0	40	80
16. Первомайски	4,0	40	80
17. Сĕнтĕр	4,0	40	80
18. Вăрмар	4,0	40	80
19. Çĕрпÿ	4,0	40	80
20. Чкаловски	4,0	40	80
21. Шăмăршă	4,0	40	80
22. Çĕмĕрле	4,0	40	80
23. Тăвай	4,0	40	80
24. Канаш	3,5	40	80
25. Советски	3,5	40	80
26. Красноармейски	3,5	40	80
27. Шупашкар районĕ	3,5	40	80
28. Шăхасан	3,5	40	80

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти февралĕн 17-мĕш.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

1942 çулти çуркунне шыв илессине хирĕç кĕрешес ĕçе организацилеме Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче чрезвычайнăй тройка тунă. Тройкăна—Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ В. Г. Григорьев, коммунальнăй хуçалăх халăх комиссарĕ И. В. Новиков тата Чăваш АССР шалти ĕçсен халăх Комиссариачĕн рабочисемпе хресченсен милицийĕн Управлени начальникĕ Я. Н. Никитин юлташсене кĕртнĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен исполкомĕсене те çавнашкал тройкăсем тума хушнă. Çав тройкăсен председателĕсем ĕçсынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен исполком председателĕсем пулаççĕ.

Комсомолецсен икэрнелĕхĕ

Комсомолăн чылай пуçламăш организацийĕсем ыйтнипе ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ мартăн 5—20-мĕшсем хушшинче колхозсенче вăрлăхсене тасатса сортлас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен икэрнелĕхне туса ирттерме йышăнчĕ.

ВЛКСМ райкомĕсене комсомолецсемпе çамрăксен икэрнелĕхĕ çинчен комсомолăн пур пуçламăш организацийĕсене те пĕлтерме тата ку ĕçе лайăх организацилесе ирттерме хушнă. Икэрнелĕхе вĕренÿрен пушă вăхăтсенче пионерсемпе шкул ачисене те анлăн явăçтармалла тунă.

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕсене Обком бюровĕ çакна асăрхаттарнă: çак ответлă ĕçе йĕркеллĕн тата кăтартуллăн ирттерессишĕн, никам та мар, вĕсем ответлă пулса тăраççĕ.

ВКП(б) Обкомĕ комсомол организацийĕсен пуçарăвне ырларĕ, хăй енчен ВКП(б) райкомĕсене комсомол организацийĕсене çак питех те кирлĕ мероприятие ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре пур енлĕн пулăшу парса тăма сĕнчĕ.

Çĕнĕ кадрсене ĕçре ытларах пулăшмалла

СОВЕТСКОЕ. Фронта кайнă юлташсем вырăнне нумай çĕрте ĕçе хĕрарăмсем тăчĕç. Паянхи куна районĕпе ответлă ĕçсене 24 хĕрарăм йышăннă. Л. Никитина юлташ банк управляющийĕ пулса ĕçлет, М. Мурзукова—больница заведующийĕ, Н. Афанасьева юлташ — районри сывлăх пайĕн заведующийĕ; вĕсем пурте хăйсене шанса панă ĕçсене тăрăшса туса пыраççĕ.

Çĕрĕç пайĕнче çеç 8 хĕрарăм ĕçлет. Вăл шутра 3 агроном, 3 зоотехник, бухгалтер тата ветврач, вăлах ветеринарнăй лечебница заведующийĕ пулса ĕçлет. Районри врачсем — пурте хĕрарăмсем. Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе, йĕркелĕхпе тасалăха сăнаса тăрас ĕçе вĕсем тимлĕн туса пыраççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕнче те, ертсе пырас ĕçсенче те, пуринчен ытларах хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Юлашки уйăхсенче кăна ялсовет председателĕн ĕçне — пĕр хĕрарăма, ялсовет секретарĕсен ĕçне — 4 хĕрарăма, колхоз председателĕсем пулса ĕçлеме — 4 хĕрарăма, колхоз фермисен заведующийĕсем пулма — 6 хĕрарăма, колхоз счетоводĕсем пулса ĕçлеме — 5 хĕрарăма уйăрса лартнă. Колхозсенче бригадирсем, звеньоводсем чылайĕшĕсем хĕрарăмсем. Вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне ĕçе параççĕ.

Çĕнĕ кадрсене куллен пулăшса, вĕрентсе пырасси партипе совет организацийĕсен куллен туса пымалли ĕçĕ пулса тăрать. Ответлă ĕçсене шанса панă хĕрарăмсене ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшмалла, куллен пысăк пулăшу парса тăмалла. Анчах çав пулăшăва вĕсене халĕ кирлĕ таран памаççĕ-ха. Вĕсене ВКП(б) райкомĕ тата райсовет исполкомĕ те çителĕклĕ таран пулăшу парса пымаççĕ.

Мăн Чураш ялсовечĕн председателĕ пулса Крылова юлташ нумайранпа мар ĕçлет. Ялсовечĕн ĕçне çĕклессишĕн Крылова юлташ чĕререн тăрăшать, çапах та ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек организацилеймен-ха. Крылова юлташ ĕçре тухса тăракан йывăрлăхсем умĕнче часчасах аптăрать, тепĕр чух вĕсене сирсе яма пĕлмест. Çавăнпа вăл районри организацисенчен пулăшу час-часах ыйтать, кĕтет. Анчах нумай чухне пулăшу ыйтнин çине вăл телефон тăрăх вăрçнине çеç илтет. Крылова юлташ ертсе пыракан ялсовет районра начар ĕçлет теме сăлтав çук. Кирлĕ мероприятисене вăл вăхăтра пурнăçласа пырать.

— Ялсоветне районра малта пыракансен ретне кăларма пирĕн пур условисем те пур, анчах нумай ĕçре пĕлменлĕх умра тăрать, çавăнпа районран пулăшу ытларах кирлĕ,—тет Крылова юлташ.

Хăйсен пĕтĕм вăйне усăллă ĕçе хума хатĕр, пултаруллă ĕçхĕрарăмĕсене суйласа илсе, ответлă вырăнсене хăюллăнрах куçарса лартмалла. Ку ыйтăва районри организацисем юлашки уйăхсенче лайăхах пурнăçласа пыраççĕ. Çакăнпа пĕрлех çĕнĕ кадрсене ĕçре вĕрентсе, пулăшса пырассине те кашни работникĕ пĕлсе, тимлĕн туса пырас пулать.

С. ИЛЬИН.

ĔÇ ТУХĂÇЛĂХНЕ ŸСТЕРЧĔÇ

КАНАШ. (Телефонпа). ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ приказне радио тăрăх итленĕ хыççăн вагонсем юсакан заводри бригадăсем хăйсен ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç.

Швайцброд юлташăн бригади февралĕн 24—25-мĕшĕнче сменăри нормăна 300 процент ытла тултарнă. Иванов юлташăн бригади те нормăна 200 процента яхăн тултарнă. Инструментальнăй цехри шлифовщик Гатин юлташ икĕ станокпа ĕçлесе нормăна тăтăшах 200-шер процент тултарать.

Çавăн пекех разметчик Яковлев, строгальщик Лукин тата термистсем Смирновпа Моряков юлташсем те сменăри нормăна 250-шар процент тултараççĕ. Халĕ вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă уяв умĕнхи социализмлă ăмăртура тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе пырса, ĕç тухăçлăхне татах та ÿстерес шухăш-кăмăлпа ĕçлеççĕ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

Нимӗҫсен 290-мӗш дивизине аркатни

ҪУРҪӖР-ХӖВЕЛАНАҪ ФРОНЧӖ, февралӗн 26-мӗш. (ТАСС). Пирӗн войскӑсем нимӗҫсен 290-мӗш дивизине хирӗҫ мӗнле ҫапӑҫнине тӗплӗнрех калаҫа параҫҫӗ. Ку дивизи пирӗн чаҫсем Старая Русса районӗнче атакӑн пӗрремӗш тапхӑрӗнчех аркатса тӑкнӑ виҫӗ дивизин шутне кӗрет.

Пирӗн чаҫсем тӑшманӑн оборона линине татса ҫав хушӑка кӗрсе кайнӑ вӑхӑтра нимӗҫсен 290-мӗш дивизийӗ пирӗн фланга пулнӑ. Унӑн пӗтӗ вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ оборона пулнӑ, вӑл ДЗОТ-сем тунӑ, ҫулсем ҫине минӑсем лартнӑ, укреплениесем тунӑ. Пирӗн подразделенисем противникӑн флангӗсенчен тавра ҫавӑрӑнса унӑн тылне кӗрсе кайнӑ. Дивизи продовольствипе боеприпассем илсе тӑракан ҫула татнӑ. Противник хӑйне кӗтмен ҫӗртен тылран пырса ҫапасса шутламан. Вара хаяр ҫапӑҫу пуҫланса кайнӑ. Нимӗҫсем темиҫе гарнизон пухнӑ та хӑйсен оборонине ҫине тӑрсах ҫирӗплетнӗ.

Пирӗн боецсем ҫулсӑр-мӗнсӗр, юр хӗвсе кайнӑ уйсем урлӑ нимӗҫсем патне ҫывхарса пынӑ, противника юрӑхсӑр условисенче ҫапӑҫтарнӑ, вӗсенчен кашни кунах халӑх пурӑнакан пӗр пункт хыҫҫӑн тепӗр пункт туртса илнӗ. Тӑшмана хӗссе тӑракан ункӑ пӗчӗкленнӗҫемӗн пӗчӗкленсе пынӑ. Тӑшман ункӑ ӑшӗнче нисӑта кӗрсе кайма пӗлмесӗр вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳренӗ.

Малтанах нимӗҫсене, пурнӑҫ пама пулса, темиҫе хутчен те парӑнма сӗннӗ. Пирӗн сӗнӗве противник йышӑнман. Ҫапӑҫура нимӗҫсен 290-мӗш дивизийӗнчен 4.000 ҫынна яхӑн вилсе пӗтнӗ. Икӗ ялӑн районӗнче кӑна пирӗн боецсем нимӗҫсен пӗтӗ пысӑк масарне асӑрханӑ. Кунта сахалтан та 2.500 хӗрес пулнӑ.

Нимӗҫсен 290-мӗш дивизине хирӗҫ ҫапӑҫса, пирӗн боецсем халӑх пурӑнакан 65 пункта фашистсенчен ирӗке кӑларнӑ, пӗтӗ нумай трофейӑсем тытса илнӗ. Ҫав трофейӑсен шутӗнче: 27 оруди, танксене хирӗҫ пемелли 58 тупӑ, 4 зенитнӑй тупӑ, 83 пулемет, 74 миномет, 126 грузовой тата 37 ҫӑмӑл автомашина, 6 мотоцикл, 230 велосипед, 24 радиостанци, 30 километра ҫити телефон кабелӗ, 4 паровоз, нумай вагонсем тата интендантски пурлӑхӑн пысӑк склачӗсем пур.

Халӗ нимӗҫсен аркатса тӑкнӑ 290-мӗш дивизийӗн пӗчӗк групписене пирӗн боецсем вӑрмансенче хупӑрласа тыткӑна илеҫҫӗ.

Германин 16-мӗш армине тӗппипех аркатас тӗлӗшпе малалла ҫапӑҫаҫҫӗ.

Батальоннӑй комиссар **Ю. КОРОЛЬКОВ.**

Пирӗн чаҫсен наступленийӗ

ХӖВЕЛАНАҪ ФРОНЧӖ. Ҫак кунсенче фронт Сталин юлташӑн приказӗпе пурӑнать. Вӑл ҫынсене хавхалантарать, боецсене ҫӗнӗрен хӑюллӑ ӗҫсем тума чӗнет. Вӗсем блиндажсене пухӑнаҫҫӗ, приказ вулаҫҫӗ те ӑна сӳтсе-яваҫҫӗ. Питех те пысӑк вӑй пулса тӑракан тата ҫавтери уҫӑмлӑ ҫырнӑ документ тӑшмана хирӗҫ темиҫе уйӑх хушши хаяррӑн ҫапӑҫнине анализ туса ӑнлантарса ӑна мар парать, вӑл тата воинсене пурне те ҫӗнтерӳ ҫулӗсӗрне, гитлерла йыткӗтӗвӗсене тӗппипех ҫӗнтерессин ҫулӗсӗрне кӑтартса парать. Митингсенче боецсем тухса калаҫҫӗ. Н-ски соединенире сержант Кузьменко акӑ ҫакӑн пек тухса тунӑ: «Эпир хамӑр наступлени тӑвас хастарлӑха вунӑ хут ӳстеретпӗр, эпир хамӑрӑн хулисемпе ялсенчен оккупантсене хӑваласа кӑларатпӑр». Ҫав ӑнланмалла сӑмахсенче тарӑн шухӑш пурри курӑнать. Фронтра ҫынсен нумай сӑмахласа тӑма ҫук, вӗсем хӑйсен шухӑшӗсене вӑрҫӑра ҫапӑҫнипе палӑртаҫҫӗ.

Сталин юлташӑн приказӗ тухнӑранпа пӗр кун иртрӗ, ҫав вӑхӑт хушшинче боецсем ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе фронт савӑнать. Эпир артиллерист Скрепилов, нимӗҫсен танкӗсем тапӑннине сирсе пӑрахса, ҫӗнтерӳ туни ҫинчен пӗлтӗмӗр.

Противник танкӗсем умлӑ-хыҫлӑ пынӑ, вӗсем хыҫҫӑн пехота утнӑ. Нимӗҫсем пирӗн боецсен наступленине чарса лартма, вӗсен ҫулне пӳлме шутланӑ пулмалла. Малта пыракан танка ҫывӑха ярса, Скрепилов темиҫе персех ҫав танка ҫӗмӗрнӗ. Вара, хӑюллӑ артиллерист ҫине иккӗмӗш танк пыма тытӑннӑ. Скрепилов икӗ снарядпа танка чарнӑ. Каярахпа пыракан виҫҫӗмӗш танк тарса хӑтӑлма шут тытнӑ. Скрепилов каялла каякан танк ҫине тӗллесе пенӗ те унӑн башнине сирпӗнтерсе янӑ, танкне чарнӑ. Унтан артиллерист хӑйӗн орудийӗнчен танксем хыҫҫӑн пыракан пехота ҫине пеме тытӑннӑ.

— Огонь!—тесе команда панӑ Скрепилов.

Нимӗҫсен колоннин варринче пӗр снаряд хыҫҫӑн тепри ҫурӑла-ҫурӑла кайнӑ. Тӑшман тарма тытӑннӑ.

Ҫак ҫапӑҫура Скрепилов аманнӑ. Анчах ҫапах та вӑл хӑйӗн вырӑнӗнчен кайман. Кайран вара пехотӑпа пӗрле малалла куҫса пынӑ чухне, вӑл хӑйӗн снарячӗсемпе фашистсен салтакӗсемпе офицерӗсене 47 ҫынна пӗтерсе тӑкни ҫинчен пӗлсе хавасланнӑ. Ҫапла ответ панӑ Оборона Халӑх Комиссарӗн приказӗ ҫине артиллерист Скрепилов.

Ҫав сехетсенчех Хӗвеланаҫ фрончӗн тепӗр участокӗнче полковник Петрашвили, хастарлӑ боецсен пӗчӗк ушкӑнне ертсе пырса, нимӗҫсем вырнаҫса тӑнӑ яла ҫавӑрса илнӗ. Тӑшман парӑнасшӑн мар пулса, контратака тума хӑтланнӑ. Ун чухне вара Петрашвили пулеметчиксене пухнӑ. Вӑл вӗсемпе пӗрле нимӗҫсен салтакӗсем ҫывхарассине питех те чӑтӑмлӑн кӗтсе тӑнӑ. Вӗсене 15 метр таран ҫывӑха ярса, Петрашвили пеме хушнӑ, тӗл персе тӑшмансене пӗтерсе тӑкма тытӑннӑ. Кайран, ҫав яла йышӑнса илсен, уҫланкӑра 115 нимӗҫӗн вилли выртни курӑннӑ.

Артиллеристсен пӗр подразделенийӗ тӑшман ҫине ӑнӑҫлӑн тапӑннӑ. Пирӗн боецсем ял патнелле пынӑ. Пирӗн боецсене хирӗҫ контратака тума хатӗрленсе, нимӗҫсем хӑйсен пехотине ҫывӑхри вырӑна пухнӑ. Нимӗҫсен пехоти ӑҫта вырнаҫнине пирӗн разведка тӗплӗн пӗлнӗ. Кӗтмен ҫӗртен нимӗҫсем ҫине тупӑсенчен пеме тытӑннӑ. Нимӗҫсем хӑранипе пӑтранса ӳкнӗ. Ҫавӑт-сулӑм ӑшӗнчен 300 салтакран 70 салтак кӑна ҫӑлӑнса тухма пултарнӑ.

О. КУРГАНОВ.
(«Правда», февралӗн 25-мӗш).

Финн салтакӗсем нимӗҫсене кураймаҫҫӗ

КАРЕЛИ ФРОНЧӖ. Февралӗн 20-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Финсен ҫарӗнче нимӗҫсене кураймасни кунран кун ӳссе пырать.

— Пирӗн салтаксем нимӗҫсене кураймаҫҫӗ, — каласа парать тыткӑна парӑннӑ финн салтакӗ Маяла Лонелло,—юлашки вӑхӑтра пирӗн хушӑра тытӑҫусем пуҫланса каясран пире нимӗҫ салтакӗсенчен уйӑрчӗҫ. Нимӗҫ салтакӗсем спекуляци тӑваҫҫӗ... эрехпе табак сутаҫҫӗ. Ҫавӑн пек ӗҫсемшӗн пирӗн 3-мӗш батальонра пӗринче финн салтакӗсем нимӗҫе хӗнесе пӑрахнӑ. Нимӗҫсене ҫавнашкал жуликла ӗҫсем тунӑшӑн наказани памалла пек, анчах командовани ҫакӑн пек приказ кӑларнӑ: ялала сутӑн илекен финн салтакӗсене суда памалла, нимӗҫ салтакӗсем ҫинчен вара... нимӗҫсен командованине пӗлтермелле. Тата ҫакнашкал ирсӗр ӗҫсем те час-часах пула пуҫларӗҫ: нимӗҫсем финн салтакӗсене тытса чараҫҫӗ те вӗсенчен ӑшӑ тумтирсене пӗтӗмпех хывса илеҫҫӗ. Финсен ҫарӗн командованийӗ вара кун хыҫҫӑн ҫакӑн пек приказ панӑ: ...салтаксен ӑшӑ тумтирсем ҫухалсан, пур чухне те финн салтакӗсенчен тумтир хакне шыраса илмелле тата суд тумалла.

Нимӗҫсем финн салтакӗсен арӑмӗсене ирӗксӗрлесе хӑйсемпе пурӑнмалла туни пире уйӑрӑмах тарӑхтарать. Рованиеми хулинче пӗр фина суд тунӑ. Вӑл фронтран таврӑнсан, хӑйӗн выҫӑпа аптӑраса ҫитнӗ арӑмне ирӗксӗрлесе хӑйпе пурӑнтарнӑ нимӗҫе вӗлернӗ пулнӑ.

«Союзниксен» ҫарӗсем хушшинчи отношенисем ҫавтери йывӑрланса ҫитнӗ. Ҫавна пула финн генералӗ Силасвуо ятарласа 753-мӗш №-лӗ уйрӑм приказ кӑларнӑ. Ҫав приказра ҫапла каланӑ:

«Юлашки вӑхӑтра эпӗ час-часах финн офицерӗсем нимӗҫсен пирӗн территори ҫинчи ӗҫӗсене критиклеснине илтетӗп. Час-часах офицерсем нимӗҫсем пирки ытти офицерсем умӗнче, ҫавӑн пекех тата кӗҫӗн начсоставпа рядовой салтаксем умӗнче те ӳпкелешеҫҫӗ. Офицерсем, нимӗн шухӑшласа тӑмасӑрах, салтаксене нимӗҫсен ӗҫӗсем ҫинчен ӑнлантарса парса, нимӗҫсене кулса, тӑрӑхласа ӳпкелесисем те сахал мар пулнӑ».

Ҫавӑн пек «дисциплинӑсӑрлӑха тата нимӗҫсене хакламаннине» финн генералӗ ҫийӗнчех чарса лартма хушать.

Финн салтакӗсем пурте Финлянди ҫарӗнчен халӗ ӗнтӗ нумай пиншер салтаксемпе офицерсем тарса пӗтни ҫинчен калаҫа параҫҫӗ. Цикева хулинчи тӗрмере ҫар сучӗ суд туса хупнӑ 700 салтак ытла ларать, Пелсо местечкинчи тӗрмере 2 пин салтак ытла ларать. Тыткӑна лекнӗ Цуханес салтак хӑй тӗрмере ларни ҫинчен, унпа пӗрле ҫав тӗрмере пӗр пин дезертир ытла ларни ҫинчен каласа парать. Салтаксем хӑйсене хӑйсем персе амантасси нумайланнӑ. Салтаксем кӑна мар, офицерсем те, фронтран мӗнле те пулин хӑтӑлас тесе, хӑйсене хӑйсем суран тӑваҫҫӗ. Финсен 3-мӗш дивизийӗнчи ҫар сучӗ 12-мӗш №-лӗ приказ тӑрӑх «начальниксем хушнине хирӗҫ тӑтӑмах саботаж туса пынӑшӑн» тата тарнӑшӑн 15 ҫынна, ҫав дивизирех дисциплинӑла ҫавӑн пек пӑснӑшӑн 10-мӗш №-лӗ приказ тӑрӑх татах 41 ҫынна суд туса тӗрмене хупнӑ.

П. БАРАННИКОВ.

Сталин юлташӑн приказӗ пирки ютҫӗршыв хаҫачӗсем мӗн ҫыраҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 25-мӗш. (ТАСС). Оборона Халӑх Комиссарӗ Сталин юлташ Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа панӑ приказа Америка хаҫачӗсем пӗрремӗш страницӑри курӑнмалли вырӑна тата пысӑк заголовоксемпе пичетлесе кӑларнӑ. Америка хаҫачӗсем ку приказ ҫинчен нумай сӳтсе-явса ҫыраҫҫӗ.

«Нью-Йорк таймс» хаҫат Оборона Халӑх Комиссарӗн Сталин юлташӑн приказӗ тухни ҫинчен хӑйӗн ССР Союзӗнчи корреспонденчӗ Паркер панӑ пӗлтерӗве пысӑккӑн пичетлесе кӑларнӑ. Хӗрлӗ Ҫар малалла ҫитӗнӳсем туса пырассишӗн Паркер мӗнпур союзлӑ государствӑсене пурне те Совет Союзне ытларах пулӑшма чӗнет. Пысӑк ҫухату тӳснӗ нимӗҫсем халӗ Европа тӑрӑх резервсем шыраса ҫӳреҫҫӗ, тесе ҫырать Паркер.

«Хӗрлӗ Ҫар,—тет Паркер,—хӑйӗн задачисене пысӑк тимлӗхпе тата хӑюллӑн пурнӑҫлаҫа пырать. Ҫапӑҫӑва вӑл ҫӗнӗрен вӗрентсе хатӗрленӗ, хӗҫпӑшаллӑ пысӑк вӑйсем кӗртет».

«Вырӑссен ҫитӗнӗвӗсем вӗсем хӑйсен планне пӗтӗ пысӑк ӑсталӑхпа тунинчен тата хӑйсен ӗҫӗ ҫине шанса тӑнинчен килеҫҫӗ,—тесе ҫырать Паркер. — Хӑйсен ӗҫӗ ҫине шаннине пула, ҫав плана хӑвӑртрах пурнӑҫлас тесе, вӗсем мӗн кирлине пурне те тӑваҫҫӗ. Ҫавӑн пекех ку ҫитӗнӳсем красноармеецсен тавҫӑрулӑхӗнчен, паттӑрлӑхӗнчен те килеҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫитӗнӗвӗсем унӑн тӗрлӗ йышши хӗҫпӑшалӗсем ҫапӑҫура пӗрне-пӗри пулӑшса пынинчен, артиллери лайӑххинчен тата Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсен соединенийӗсем пӗр-пӗринпе таччӑн ҫыхӑнса тӑнинчен килеҫҫӗ», тесе ӑнлантарса парать корреспондент.

— Вырӑссен ӑнӑҫӑвӗ вӗсене пӗрлешнӗ государствӑсем енчен малалла пулӑшса пырассине пысӑклатса пыма хушать,— тет Паркер. — Хӗрлӗ Ҫара халӗхи вӑхӑтра вӑрҫӑ материалӗсем питех те нумай кирлӗ.

«Совет Союзӗ татах та пысӑк резервсем хатӗрлет, — тесе ҫырать малалла Паркер. — Хӗҫпӑшал тавраш ҫителӗклӗ таран туса кӑларас тесе, совет халӑхӗ вӑхӑта шутламасӑр ӗҫлет. Вырӑссен ҫитӗнӗвӗсем кӑтартса панӑ тӑрӑх, тӑшмана ҫӗнтересси, нумайӗшӗ шутланӑ пек, ытлашши инҫетре мар. Вӑрҫӑ ӗҫӗ ҫине союзниксем пурте хӑйсен вӑйӗсене пӗртанах хурса йывӑрлӑхсене те пӗртанах тӳссен, ҫавӑн пекех тата союзлӑ государствӑсен пуҫлӑхӗсем ҫав ӗҫсене вӑхӑтра тума хӑюлӑх ҫитерсен, ҫӗнтерӗве татах та часрах тума пулӗччӗ. Ҫакӑн пек ӗҫе тунӑшӑн пулас награда, халӗ Хӗрлӗ Ҫар ятне чыслакан хисеплӗх пекех, пысӑк пулма пултарать».

Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа Вашингтонра Совет посольствинче пулнӑ йышӑну

ВАШИНГТОН, февралӗн 23-мӗш. (ТАСС). Февралӗн 23-мӗшӗнче, Вашингтонра Совет посольствинче Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа йышӑну пулса иртнӗ. Йышӑнура 650 хӑна пулнӑ. Вӑл шутра—Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫар министрӗ Стимсон, Англи посолӗ лорд Галифакс, туслӑ ытти ҫӗршывсен представителӗсем, Америкӑн ҫарӗпе флотӗн высши чинӗсем, ҫавӑн пекех тата ютҫӗршывсен ҫар атташисем.

Фон Папена вӗлерме тапӑнни ҫинчен Анатолийски агентство пӗлтерни

АНКАРА, февралӗн 24-мӗш. (ТАСС). Анатолийски агентство ҫапла пӗлтерет: паян 10 сехетре ирхине Ататюрк бульварӗнче бомба ҫурӑлса кайса, ҫак самантра ҫав вырӑнта иртсе пыракан пӗр ҫынна татӑкан-татӑкан вакласа пӗтернӗ. Ҫав ҫын аллинче чӑрканӑ темӗнле япала йӑтса пынӑ. Ҫав япала бомба пулнӑ пулӗ тесе шутлаҫҫӗ. Взрыв пулнипе икӗ хӗре амантнӑ. Ҫав вӑхӑтра Германин Турцири посолӗ фон Папенпа унӑн арӑмӗ урамӑн тепӗр енче, бомба ҫурӑлнӑ вырӑнтан 17 метр аякхарахра, иртсе пынӑ. Взрыв хумӗ пырса тивнипе вӗсем ҫӗре ӳкнӗ, унтан тӑнӑ та посольство ҫуртне тӗрӗс-тӗкӗлех ҫитнӗ. Ҫак ӗҫе тӗрӗслесе тӗпчеме тытӑннӑ. Шалти ӗҫсен министрӗпе прокурор ҫийӗнчех взрыв пулнӑ вырӑна кайнӑ. Республика президенчӗпе правительство пуҫлӑхӗ Германин посольствине хӑйсен кабинет начальникӗсене янӑ, ютҫӗршыв ӗҫсен министрӗпе министерствӑн генеральнӑй секретарӗ фон Папен патӗнче хӑйсем пулнӑ. Взрыв шӑпах ӗнтӗ фон Папен ҫывӑхӗнче пулнӑ пирки, ҫак ирсӗр акта Германи посолне хирӗҫ тунӑ пулӗ тесе шутлама май панӑ прокурора. Ӗҫе малалла тӗрӗслесе тӗпчеҫҫӗ.

Анкарари взрыв ҫинчен мӗн ҫыраҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 26-мӗш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Анкарари корреспонденчӗ унти взрыв ҫинчен тӗплӗрех калакан хыпарсене пӗлтерет. Бомба Германин Турцири посолӗ фон Папен иртсе пыракан вырӑнтан самаях аякра ҫурӑлса кайнӑ. Корреспондент ҫапла калать: взрывра вилнӗ ҫыннӑн тумтирӗнче, коммюникере каланӑ тӑрӑх, хутсем тупнӑ. Ҫав хутсем ҫине Германи посольствин штампне пуснӑ пулнӑ. Вӑл ҫын бомбӑна йӑтса пыракан ҫынах пулӗ тесе шутлаҫҫӗ.

Корреспондент ҫакна асӑрхаттарать: Германипе Италин Анкарари паллӑ учрежденийӗсем взрыв пирки питех те васкаса «Англи агенчӗсем» айӑплӑ тесе пӗлтернӗ.

Корреспондент ҫапла шутлать: гитлеровецсем фон Папен ҫине юри тапӑнаҫҫи тунӑ. Ҫапла хӑтланса вӗсем Турцин тулашри политикине хӗсме сӑлтавсем тупасшӑн.

Германипе Итали оккупанчӗсем Грецире пӗр-пӗрне кышлани

СТАМБУЛ, февралӗн 23-мӗш. (ТАСС). Грецире хутшӑнса тӑракан ютҫӗршыв ҫыннисем каланӑ тӑрӑх, Италипе Германин пӗр-пӗринпе килӗшмен икӗ тӗрлӗ шухӑшӗсем Грецире питех те ҫивӗчленсе ҫитнӗ. Германи ҫарӗн командованийӗ Итали оккупанчӗсене Греци ҫӗршывне пӗрле ҫаратас ӗҫрен пачах пӑрса янӑ. Ҫакна хирӗҫ тӑрса, халь гитлеровецсем «премьер» пулса ӗҫлеме лартнӑ Челакоглу генерала Итали оккупанчӗсем вырӑнтан сирпӗтсе кӑларма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем ун вырӑнне хӑйсем майлӑ тӑракан ҫынна, ӗлӗк Греци министрӗ пулса ӗҫленӗ Раваллиса кӗртсе лартасшӑн. Ютҫӗршыв ҫыннисем ҫапла шутлаҫҫӗ: нимӗҫсем «премьерта» Челакоглунах хӑварасшӑн ҫине тӑраҫҫӗ.

Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ

АМЕРИКА ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 26-мӗш. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫар министерстви кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: Батаан ҫурутравӗ ҫинче (Лусон утравӗ) пӗтӗм фронт талкӑшӗпех Америкӑпа Япони патрулӗсем пӗр-пӗринпе хаяррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Америкӑпа Филиппин войскисем хӑшпӗр ӑнӑҫусем тунӑ.

АНГЛИ ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

ЛОНДОН, февралӗн 26-мӗш. (ТАСС). Англин Рангунри командованийӗ кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: Ситтанг юханшывӗн районӗнчи фронтри хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн Англи войскисем ҫӗнӗлле йӗркеленеҫҫӗ. Фронтӑн ҫурҫӗр участокӗнче пысӑк операцисем пулман.

Бирмӑра союзниксен авиацийӗ Японин сывлӑшри ҫарӗпе тиҫӗр ҫинчи ҫарӗсене ҫӗнӗрен вӑйлӑн пырса ҫапнӑ. Кун каҫиччен японецсен 30 истребительне пӗтерсе тӑкнӑ.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙӖН КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, февралӗн 26-мӗш. (ТАСС). Голланди Индийӗн командованийӗ кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: Голланди Индийӗн бомбардировщикӗсем Паллембанг районӗнче (Суматра) японецсем йышӑннӑ аэродромсене ӑнӑҫлӑн атакӑланӑ. Бомбӑсем тӗл ӳкнипе вӑйлӑ пушарсем тухнӑ.

ЯПОНИ ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

ТОКИО, февралӗн 26-мӗш. (ТАСС). Официальнӑй сведенисем тӑрӑх, Япони авиацийӗ Ява утравӗ ҫинчи авиаци базисене вӗҫсе пырса тапӑннӑ, противника чылай пысӑк сиен кӳнӗ.

—о—

Японипе Китай вӑрҫи

Хунань провинцин ҫурҫӗр пайӗнче (Центрти Китай) февралӗн 25-мӗшӗнче Китай войскисем Японин Цал Джан-лири гарнизонне атакӑланӑ. Ҫапӑҫу пит те хаяррӑн пулса иртнӗ. Икӗ енчен те пысӑк ҫухатусем пулнӑ. Ҫавӑн пекех тата юлашки кунсем хушшинче Гуангун провинцинче те (Кӑнтӑрти Китай) Чеаждоу районӗнче ҫапӑҫусем пулнӑ. (ТАСС, февралӗн 26-мӗш).

—о—

Совет Союзӗ тӑрӑх

● Дагестанри Дербент, Каякент, Касумкент районӗсенче уйхирти ҫурхи ӗҫсем пуҫланнӑ. Серголински МТС ака тума тытӑннӑ.

● Ярославльри пионерсен дворецӗнчи ачасем ҫар чаҫӗсемпе призыв пункчӗсенче, общежитисемпе шкулсенче 800 концерт панӑ. Пионерсем организациленӗ театра куракансем уйрӑмах юратса пӑхаҫҫӗ.

● А. Толстой писатель «Иван Грозный» ятлӑ ҫӗнӗ пьеса ҫырса пӗтернӗ. Ку пьесӑна халӗ Челябинск хулинче спектакльсем кӑтартакан Малӑй театр лартать.

—о—

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумӗ СССР Совнарком Председателӗн заместительне М. Г. Первухин юлташа Хими промышленноҫӗн Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

СССР Совнаркомӗ М. Ф. Денисов юлташа Хими промышленность Халӑх Комиссарӗн заместителӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сталин юлташӑн кӑтартӑвӗсене пурнӑҫласа татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвар

Февралӗн 23-мӗшӗнче Вӑрнар районӗнчи коммунистсен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн пӗрлешӳллӗ пленумӗн итогӗсене сӳтсе-яврӗ, ҫакӑнпа пӗрлех районри парторганизаци ӗҫне тишкӗрсе тухса, Сталин юлташӑн кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума практикӑллӑ мероприятисем палӑртрӗ. Ҫак ыйтупа пухура ВКП(б) райкомӗн секретарӗ С. Сергеев юлташ доклад туса пачӗ.

Сталин юлташ 1941 ҫулти ноябрӗн 6-мӗшӗнче Мускав Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ докладра лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе районри парторганизаци тата ӗҫҫыннисем чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Масса хушшинче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫ ҫӗнӗ пусӑма ҫӗкленчӗ. Сталин юлташӑн историллӗ докладне ӗҫҫыннисене ӑнлантарса парса, ВКП(б) райкомӗ 600 яхӑн лекцисемпе докладсем туса иртрерӗ. Чылай парторганизацисем хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек ҫӗнетрӗҫ, массӑсем хушшинчи политикӑллӑ-ӑнлантару ӗҫне лайӑхлатрӗҫ. Сталин юлташ докладне кашни ӗҫҫынни патне ҫитерсе, ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн, рабочисен, колхозниксен тата ялти интеллигенцин политикӑллӑ-производствӑллӑ активлӑхӗ татах та ӳсрӗ.

Машинно-тракторнӑй станцинче ӗҫлекенсем 1941 ҫулти ӗҫ планне 131 процент тултарчӗҫ. Кириллов юлташ ертсе пыракан бригада хӑйӗн ҫулталӑк планне 132 процент пурнӑҫларӗ, 530 литр горючи перекетлесе хӑварчӗ. Чернов юлташ ертсе пыракан бригада та ӗҫ планне 117 процент тултарнӑ, 351 литр горючи перекетлесе хӑварнӑ. Трактор бригадисем те ӗҫ нормине планран чылай иртерсе пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. «Труд», «Лесхоз», урапа-ҫуна тӑвакан мастерской тата ытти промартельсем те фронт заказӗсене хӑвӑрт пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Сталин юлташ чӗнӗвӗ ҫине ответлесе, районри колхозсем пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли 1941 ҫулти плана район 102 процент ытла пурнӑҫларӗ. Сысна ӗрчетес плана 126 процента ҫити тултарнӑ.

Районри вуншар колхозсем иртнӗ ҫул гектартан ҫӗршер пӑт тырпул туса илчӗҫ. Кольцовкӑри Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз кашни гектартан 200-шер пӑт тырӑ туса илчӗ. Хирпуҫӗнчи «Победа» колхоз 615 гектарлӑ ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче кашни гектар пуҫне ҫӗршер пӑт тӗштырӑ туса илчӗ, 25 гектар ҫинче кашни гектартан 23 центнер ытла кӗрхи тулӑ туса илнӗ. Хурӑн-Сурти Чапаев ячӗпе тӑракан колхозра И. Шашков юлташ ертсе пыракан бригада кашни гектартан вӑтам шутпа 29 центнер кӗрхи тулӑ илнӗ.

Партин вырӑнсенчи чылай организацийӗсем массӑсем хушшинчи партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Ӗҫҫыннисен пӗтӗм вӑйне, пултарулӑхне нимӗҫ оккупанчӗсене пӗтерсе тӑкнӑ ҫӗре, ҫӗршывпа фронта вӑйлӑн пулӑшма мобилизацилеҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв оборонин фондне районри ӗҫҫыннисем 134.245 тенкӗ укҫа, 188.000 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем, 787 центнер тырӑ, 24 центнер ытла аш-какай, 1158 литр сӗт, 66 килограмм ҫу, 1728 ҫӑмарта, 242 килограмм чӑх-какайӗ, 11 центнер тӑварланӑ хӑяр, 260 килограмм помидор, 160 килограмм тӑварланӑ кӑмпа пачӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа колхозниксемпе ытти ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне 1758 килограмм туртакан 117 посылка ячӗҫ.

Канмалли кунсенче ӗҫхалӑхӗ пысӑк ҫӗкленӳпе воскресниксенче ӗҫлет. Пулса иртнӗ 4 воскресникре пурӗ 5.981 ҫын ӗҫленӗ. Вӗсем 1809 тенкӗ укҫа, 3042 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Вӗсене пурне те оборона фондне хывнӑ. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсем валли халӑх пысӑк хавхаланупа ӑшӑ тумтирсем хатӗрлет. Февралӗн 23-мӗш тӗлне районри ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли пурӗ 2289 тир, 930 килограмм ҫӑм, 468 мӑшӑр ҫӑмата, 187 кӗрӗк пиншак, тиртен ҫӗленӗ 124 мӑшӑр алса, 341 мӑшӑр ҫӑм алшиш, 425 мӑшӑр носки пухса панӑ.

Пирӗн колхозниксен, рабочисемпе служащисен тата совет интеллигенчӗсен патриотла туйӑмӗ пысӑккӑн ӳсрӗ, политикӑллӑ активлӑхӗ ҫӗкленчӗ. Ҫӗршывра отечественнӑй вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра вӗсем хӑйсен пӗтӗм вӑйне фашистла ирсӗр оккупантсене пӗтерсе тӑкас ӗҫе, хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флотне куллен вӑйлӑн пулӑшса тӑнӑ ҫӗре параҫҫӗ. Ӗҫҫыннисен политикӑллӑ ҫӗкленӗвне татах та вӑйлатса, ҫирӗплетсе пырасси, ҫав патриотла вӑя ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунӑ ҫӗре кӗртесси коммунистсен чыслӑ обязанноҫӗ пулса тӑрать. Коммунист — ӗҫре пример кӑтартаканӗ, ертсе, вӗрентсе пыраканӗ пулмалла. Ҫакна асӑрхаттарса, докладчик уйрӑм коммунистсен ӗҫне хытӑ критиклерӗ, вӗсем ӗҫленӗ участоксенчи ҫитменлӗхсене витӗмлӗн палӑртрӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Вӑрнар парторганизацийӗ ВКП(б) кандидачӗсен ретне 7 ҫынна, члена 13 ҫынна ҫеҫ илнӗ. Уйрӑмах кандидатсене члена куҫарас ӗҫ япӑх тӑрать. Районра пурӗ 49 кандидат, вӗсенчен 42-шӗн кандидатра тӑмалли срокӗ тухнӑ. Ҫакӑ вӑл партин пуҫламӗш организацийӗсем ҫамрӑк коммунистсене ӗҫре вӗрентсе ҫӑнаса пыманнинчен, партин ҫамрӑк кадрӗсемпе сахал интересленнинчен килнӗ.

С. Сергеев юлташ доклачӗ тӑрӑх прение 11 коммунист тухса калаҫрӗ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче районри ҫитменлӗхсене уҫҫӑн кӑтартса пачӗҫ. Прокурор Попов юлташ халӑха куллен кирлӗ япаласене туса кӑларас ӗҫ районра япӑх тӑнине тата обществӑллӑ столовӑйсемпе суту-илӳ организацийӗсенчи йӗркесӗрлӗхсене кӑтартса критиклерӗ.

Ершепуҫ ялсовечӗн председателӗ Тимофеев юлташ ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ответлӑхпа туса пыман уйрӑм коммунистсене хытӑ критиклерӗ. Коммунист Волков юлташ «Трудовик» колхоз председателӗ пулса ӗҫлет. Анчах вӑл колхоза коммунист пек ертсе пыма тӑрӑшмасть. Колхоз ҫуракине хатӗрленме халӗ те тытӑнман-ха, вӑрлӑх фончӗсене уйӑрса ҫитермен, ялхуҫалӑх машинисене пӗрне те юсаман.

Павлова юлташ («Волонтер» колхозран) райҫӗрӗҫ пайӗн агрономӗсем колхозсене пырсан та тивӗҫлӗ пулӑшу паманни ҫинчен, ялсене тухсан ӗҫрен пӑрӑнса ҫӳренисем те пулни ҫинчен каларӗ.

Пуху вӑрманпромхозӑн ӗҫне ҫак кунсенчех тивӗҫлӗн йӗркелесе ҫӗклеме кирлине палӑртрӗ. Унӑн руководителӗн Сазанов юлташӑн япӑх ӗҫне пуху хытӑ критиклерӗ. Ҫавӑн пекех чылай колхозсенче ҫуракине хатӗрленес ӗҫе васкавлӑнрах тума, ку ӗҫре пур чӑрмавсене те сирсе яма хушрӗ.

Сталин юлташ лартнӑ задачӑсене малалла пурнӑҫласа пырас ӗҫе тата парти ретне ҫӗнӗ членсем илес ӗҫе татах та ытларах вӑйлатма пуху татӑклӑ решенисем йышӑнчӗ.

В. ЦЫПЛЕНКОВ.

Коллектив товарищей по работе выражает свое глубокое соболезнование Валк Иде Зиновьевне и ее дочери Лие по случаю смерти мужа и отца
ВАЛК ЛЬВА НАУМОВИЧА

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ
требуются
на постоянную работу: опытный тракторист, механик по двигателю внутреннего сгорания, бондари, возчики, кочегары, чернорабочие, работницы.
Оплата сдельная.
С предложениями обращаться: Чебоксарский ликеро-водочный завод, ул. Чувашская, № 65, к главному инженеру.
5—5

Чебоксарской государственной чулочной фабрике
ТРЕБУЮТСЯ:
главный механик, электромонтер, охранники, чернорабочие И В УЧЕНИЧЕСТВО: на вязальщиц, кеттельщиц, мотальщиц, сортировку - репасировку и на пом мастеров вязальных и кеттельных машин.
Обращаться по адресу: Набережная Кайбулка, 8, отдел кадров.

ТРЕБУЮТСЯ
ДЛЯ РАБОТЫ В ЧЕБОКСАРАХ:
секретарь-машинистка, плотники, столяры, маляры, штукатуры, каменщики, бетонщики, печники, арматурщики, кровельщики, землекопы, кузнецы, шофера, подсобные рабочие, сторожа, курьеры.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары улица К. Маркса, дом № 80, контрольная будка, с 2 час. дня до 7 час вечера.
3—3 Администрация.

Чувашской Республиканской Затотживконторе на постоянную работу требуются: зам. главного бухгалтера и бухгалтер.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Учительская улица, 39.
ЗАГОТЖИВКОНТОРА.

ТРЕБУЮТСЯ ДЛЯ РАБОТЫ В ГОРОДЕ ЧЕБОКСАРАХ
проектировщики, инженеры и техники-строители, сантехники и энергетики, а также чертежники-копировщики.
С предложением обращаться письменно: почтовый ящик № 4 и по телефону № 5-29.
3—3 Дирекция.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1003 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: л: